

Михеева (Ануфриева )Антонида Петровна аса илет.

1928-мĕш çулта Нагорни поселккинче çуралса ӳснĕ. Ульяновкăри (Вăтăр Юман Керемет) шкулĕнче вĕреннĕ. Класра ачасем нумайччĕ: аса илет Тунькка мăнакка. 1943-мĕш çулта 7 класс пĕтернĕ. Нумай çул иртнĕ пулин те вăл паянхи кунччен класра миçе хĕр ача тата миçе арçын ача вĕреннине те лайăх астăвать. Ăна кăна та мар-ха, малти партăра кам ларнине те манман. Класра 7 арçын ача та 5 хĕр ача вĕренеттĕмĕрччĕ тет мăнакка. Пĕрремĕш партăра Сашина Александра Сергеевна тата Антонова Клавдия Павловна ларатчĕç аса илет вăл. Манпа пĕрле вĕреннисем халĕ нумайăшĕ çук ĕнтĕ, анчах та хăш чухне вĕсене йĕркипе аса илсе ларатăп: Волков В., Костюшкин Я. , Мельников П., Логинов Д., Охотников В., Ермолаев Г., Кузьмин(Горшков) Н., тата хĕрсем : Дютина А., Проськина вĕренеттĕмĕрччĕ. Вăрçă çулĕсем пулсан та ачасем вĕренес тесе тăрăшатчĕç. Шкула йĕркеллĕ çӳретчĕç.

1941-мĕш çулта пирĕн шкулта Писарев Владимир Моисеевич директор пулса ĕçлетчĕ, арăмĕ—Галина Петровна пире вĕрентетчĕ. Çак çултах(1941)пирĕн шкулта пĕрремĕш хут Ёлка пулчĕ. Ачасемшĕн мĕн тĕрлĕ савăнăç пулни çинчен каламалли те çук пулĕ. Хальхи пекех ёлкăра юрă юрланă та сăвă каланă ĕнтĕ. Эпĕ астăвасса çак ёлкăра Волков Владимир «Партизан вилĕмĕ», Костюшкин Якку «Шăна туйĕ» сăвă каларĕç. «Мужичок с ноготок» сăвă тăрăх инсценировка хатĕрленĕччĕ. Якку –лаши, Волков Володя «мужичок» пулнăччĕ.

Шкул пĕтернĕ хыççăн манăн кукка - Маркелов Георгий Терентьевич- аннен пиччĕшĕ, вăрçăран аманса таврăннăччĕ – мана Мускава илсе кайрĕ…Унта вара 1944-1947-мĕш çулчченех Научно -исследовательский институтра (çар продукцине кăларакан заводра) чертежно-кооперативный отделта ĕçлерĕм. Кайран 1947-1949-мĕш çулсенче сад ăстисем хатĕрлекен шкулта вĕрентĕм. Вĕренсе пĕтерсен хамăр района агроном пулса ĕçлеме ячĕç. Хамăрăн районти ялсене пулăшма яратчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче вĕреннисĕр пуçне колхозра та ĕçленĕ, (каларăм ĕнтĕ заводра та вăй хунă), çавăнпа—и-тен 1945-мĕш çулта «За Доблестный труд» медаль парса чысларĕç.



*Сăнӳкерчĕк çинче А.П.Ануфриева хăйĕн çывăх тăванĕсемпе.*



Йăвашкелне качча тухнă хыççăн колхоз пахчинче пахча-çимĕç ÿстернĕ çĕрте бригадир пулса ĕçлерĕм. Унтан колхозра тата ытти çĕрте те вăй хунă. Ĕçленĕ ĕнтĕ, ĕçлемесĕр пурăнман…(тесе асаилӳне вĕçлере те шухăша кайрĕ)

Хамран та хушса калас килет. Чăнах та питĕ пултарӳллă та ĕçчен хĕр арăм пулнă манăн мăнакка. Çамрăклах упăшкасăр юлнă. Икĕ хĕр пăхса çитĕнтернĕ, вĕсене аслă пĕлӳ панă. Колхозра ĕçленĕ çулсенче яланах Йăвашкел ялсоветĕнче депутата темиçе хутчен те суйланнă. Ялти хисеплĕ çынсенчен пĕри пулнă.

Халĕ вăл Шупашкарта пурăнать. Çулĕ аванах аслă пулин те ĕççĕр ларма юратмасть. Алса тĕрлĕ эрешсемпе эрешлесе çыхать(парнелеме )тет яланах. Вăл кăна та мар –ха—питĕрех те кроссвордсен, сканвордсен тупсăмĕсене шыраса ларма юратать. Ватăлнă пулсан та нумай пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ—мăнаккаçăм…

Çирĕп сывлăх сунатăп сире!!! Малалла та нумай çул савăнтар пире…

Михеева Антонида Петровна асаилĕвĕсене Матросова Валентина Владимировна çырса илнĕ.